***Ванюшина Ирина Васильевна***
учитель
МБОУ «Байдеряковская ООШ Яльчикского муниципального округа»
д. Байдеряково, Чувашская Республика

# ТĂВАН ПУПЛЕВЕ АТАЛАНТАРМАЛЛИ ТУХĂÇЛĂ МЕЛСЕМ

***Аннотаци***: *статьяра вăтам классенче чăваш чĕлхипе литератури урокĕсенче тăван пуплеве аталантарас ыйтусене пăхса тухнă. Автор, чăваш чĕлхи вĕрентекенĕ, хăйĕн ĕç опычĕпе паллаштарать, çыхăнуллă пуплеве аталантармалли тухăçлă мелсене кăтартать. Ĕçре текстпа ĕçлени, пултарулăх ĕçĕсем (кластер, синквейн), сценарисем, вăйăсем, словарь ĕçĕ, чăвашла калаçу культурине ӳстересси пирки сӳтсе явнă. Чăваш чĕлхин тасалăхне упрасси, ăна вырăс чĕлхин витĕмĕнчен хӳтĕлесси питĕ кирлĕ иккенне палăртнă.*

***Уçăмлă сăмахсем***: *тăван сăмах, чăваш чĕлхи.*

# ЭФФЕКТИВНЫЕ МЕТОДЫ РАЗВИТИЯ РОДНОЙ РЕЧИ

***Аннотация:*** *статья посвящена актуальным вопросам развития родной речи у учащихся средних классов на уроках чувашского языка и литературы в условиях современного билингвизма. Автор, учитель чувашского языка, делится практическим опытом использования эффективных методов и приемов для формирования связной речи, обогащения словарного запаса и привития интереса к родному языку. В работе рассматриваются такие формы работы, как анализ текста, творческие задания (кластеры, синквейны), инсценировки, ролевые игры, словарная работа, а также особое внимание уделяется воспитанию культуры общения на примерах родного фольклора и литературы. Статья подчеркивает важность сохранения чистоты чувашского языка в условиях активного влияния русского языка.*

***Ключевые слова:*** *родная речь, чувашский язык.*



Content is licensed under the Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

Пирĕншĕн, чăвашсемшĕн, чăваш чĕлхи тăван чĕлхе шутланать, вăл пирĕн анне панă чĕлхе пулса тăрать. Тăван чĕлхе пире мĕн ачаранпах тавралăхри тĕнчепе паллаштарать, ăс-тăна ӳстерме вĕрентет. Тăван чĕлхене лайăх пĕлни пире ытти чĕлхесемпе те усă курма, çĕнĕ пĕлӳ илме пулăшать.

Вăхăт иртнĕçем Чăваш енри шкулсенче те ачасене тăван чĕлхене вĕрентес ĕçре йывăрлăхсем пулăраççĕ. Чăваш çемйинче çуралнă ачине ашшĕ-амăшĕ вырăсла калаçтарма тăрăшни сисĕнет. Ача садĕнче те, урамра та, килте те пĕчĕк чăваш ачи вырăсла перкелешет. Мĕншĕн ачăрпа вырăсла калаçатăр, хăвăр калаçтармасăр камран вĕреннĕ-ха вăл тесе ыйтсан: «Телевизорпа мультик курса хăех вырăсла калаçма вĕреннĕ», – терĕ пĕр амăшĕ. Эпир те курнă вырăсла мультфильмсем… Чăваш çĕрĕнче чăвашлах калаçатпăр, вырăсла та пĕлетпĕр. Эпир – чăвашсем. Чăваш Республикинче пурăнатпăр. Вырăсла-чăвашла хутăш калаçу вара пирĕн чĕлхене илем кӳместех. Ачасен пуплевне çулран çул ют чĕлхерен кĕнĕ сăмахсем илемсĕрлетни вара хытах пăшăрхантарать.

Ачасене тĕрĕс çырма, вулама вĕрентме çеç мар, вĕсен калаçу ăсталăхне ӳстересси, сăмах пуянлăхне аталантармалли майсем тупса парасси – кашни чăваш чĕлхипе литература вĕрентекенĕн тĕллевĕ, тивĕçĕ. Вăтам классенче чăваш чĕлхипе литературине вĕрентнĕ май хамăн темăна çапла палăртрăм: «Тăван пуплеве аталантармалли тухăçлă мелсем». Мĕнле мелсемпе ытларах усă куратăп-ха эпĕ вĕрентӳ ĕçĕнче?

Çĕнĕ Федерацин патшалăх вĕренӳ стандарчĕ вăя кĕнĕ тапхăрта тăван чĕлхепе литературăна вĕрентес ĕçре çĕнĕ мелсемпе меслетсем йышлансах пыраççĕ. Ачасен çыхăнуллă калаçу ăсталăхне аталантарас ĕçре те вĕсене кăсăклантарас çĕнĕ майсем шыраса тупасси питĕ кирлĕ.

Вăтам классенче çыхăнуллă пуплеве аталантарма пур учитель те, паллах, тĕрлĕ мелсемпе усă курать. Чĕлхе ăслăлăхĕн пуплев епле йĕркеленни çинчен вĕрентекен пайне, синтаксиса, тĕплĕнрех 8-мĕш класра вĕренетпĕр, «Синтаксиспа пунктуаци» хатĕрленӳ курсне 5-мĕш класранах пуçлатпăр. Пуплев чи



Содержимое доступно по лицензии Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

малтанах предложенисем ҫине пайланать. 5-мӗш класс ачисемпе малтанхи уроксенче чи пӗлтерӗшлӗ предложенисем ҫинче чарӑнса тӑратӑп. Хамӑрӑн илемлӗ чӗлхепе аслисене, тус-тантӑшӗсене сывлӑх сунма пӗлеҫҫӗ-и-ха вӗсем? Пӗлеҫҫӗ. «Сывлӑх сунатпӑр, Ирина Васильевна!» – теҫҫӗ. Эпир, чӑвашсем, урампа иртсе пынӑ чух ӗҫлекене вӑй паратпӑр-и, пӗр-пӗрне тӗл пулсан «Ӑҫта каятӑн?» теетпӗр-и – вырӑссем пек ялан «Здравствуйте! – Сывлӑх сунатӑп!» теместпӗр. Ӗҫлекенсене курсан «вӑй патӑр!», урамра пӗр-пӗр ҫынна курсан «лавкканалла каятӑн-и?» тенисем сывлӑх суннине те, ҫын пурнӑҫӗпе интересленнине те пӗлтереҫҫӗ тесе ачасемпе кӑсӑклансах сӳтсе яватпӑр, тишкеретпӗр, ӑнланатпӑр. Чӑн чӑвашла пуплев чуна лӑпкать, вӑй парать, хавхалантарать.

Пуплев культурине ӳстерме текста тӗпчекен тата калаҫу тапхӑрӗнчи тӗрлӗ тӗслӗ ӗҫсем питӗ пулӑшаҫҫӗ. Ку ӗҫ-хӗл йышне тӗпчев ӗҫӗсем те кӗреҫҫӗ. Сӑмахран, текстри ҫӗнӗ сӑмахсене словарьте е интернет ресурсӗсенче шыраттарни, вырӑсла-чӑвашла куҫарттарни, пӗр-пӗрне кӑсӑклӑ, проблемӑллӑ ыйту пама, содержание тӗрӗс те илемлӗ, яка чӗлхепе каласа пама хӑнӑхтарни, вулав техникине аталантарни, пӗри вуланӑ е содержани каланӑ хушӑра ыттисем итлесе пырса унӑн пуплев йӑнӑшӗсене асӑрхаса ҫырса пыни тата ыт.те. Содержани каланӑ вӑхӑтра хайлаври цитатӑсемпе усӑ курма хӑнӑхтармалла. Ӗҫ-пулӑмсем ҫинчен тепӗр чух пӗр-пӗр герой ячӗпе калаҫтарсан питӗ кӑсӑклӑ. Ачасене монолог е диалог тутарни те пулӑшать – ку вӗсен шухӑшӗсене йӗркелеме, тишкерӳ тума вӗрентет.

Вуланӑ хайлавсем, текстсем хыҫҫӑн хӗвеллӗ кластер, синквейн, даймонт ҫыртарни, икӗ е виҫӗ енлӗ дневникпа ӗҫлени те ҫыхӑнуллӑ пуплеве аталантарма пулӑшакан мелсемех.

Сочинени, изложени ҫыртарасси яланах пулса пынӑ ӗҫсем. Ҫак ӗҫсене ҫырма хатӗрленӗ чухне «виҫӗ енлӗ таблицӑллӑ кластер» тутарни ачасене питӗ пулӑшать. Пӗр-пӗр темӑпа панӑ сочиненире усӑ курмалли япала ячӗсем, паллӑ



Content is licensed under the Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

ячĕсем, глаголсем тупатпăр, таблицăна çырса пыратпăр. Килте ача çак пухнă материалпа предложенисем çеç йĕркелет, тулли, анлă хайлав çырса килет.

Çыхăнуллă пуплеве аталантарас тĕллевпе ачасене хайлавсем тăрăх инсценировкăсем (тĕслĕхрен, Г.Волковăн «Ăслă ача») е пĕр-пĕр темăпа сценарисем (илемлĕ вулакансен конкурсĕ) çырма та хăнăхтарса пыратпăр, сăвă-калав, юмах çырас пултарулăх ĕçне те хăшĕ-пĕри хаваспах хутшăнать. Вырăсларан чăвашла куçармалли тĕрлĕ текстпа (проза, сăвă) ĕçлени те пуплеве аталантарать. Пултарулăх ĕçне çырнă чухне ача хăйĕн ăшĕнчи пытанчăк шухăшĕсене те уçса пама тăрăшать. Хайлав сыпăкĕсене выляса кăтартасси те йăлана кĕнĕ ĕçсемех. Пултарулăх мелĕсемпе усă курни ачасен çыхăнуллă пуплевне палăрмаллах аталантарать. Çавăн пекех вĕсем ача-пăчана пуян чĕлхепе усă курма, хăйĕн шухăшне ирĕклĕ те тĕрĕс çирĕплетме вĕрентме пулăшаççĕ.

Тăван чĕлхен тĕрлĕ ыйтăвĕсене ачасем грамматика урокĕсенче вĕренеççĕ. Теори материалĕ ачасемшĕн кичем ан пултăр тесен чĕлхе факчĕсене урокра çăмăл чĕлхепе ăнлантармаллине кашни учителех аван пĕлет. Ачасене чĕлхе материалĕпе интереслентерме пĕлмелле, вĕсен ăс-тăнĕнче тăван чĕлхене лайăхрах, тĕплĕрех, тарăнрах пĕлес туйăм çуратмалла. Çавăнпа чĕлхепе литература урокĕсенче тĕрлĕ грамматика вăййисемпе, викторина ыйтăвĕсемпе усă куратпăр. Пиллĕкмĕшсем хăйсемех ыйтаççĕ: «Атя выляр-ха», – теççĕ вара. Вĕсен выляс килет. Эпĕ вара вĕсен киленĕвĕпе усă куратăп, «икĕ мулкач» тытатăп: пĕрре ачасем выляççĕ, канаççĕ, тепре – эпĕ вĕсене вăйăра чĕлхе материалне вĕрентетĕп, чĕлхине аталантаратăп. Урок вăхăтĕнче кану самантĕнче фразеологизмсемпе те чылай ĕçлетпĕр. Вĕсем пирĕн пуплеве сăнарлă тăваççĕ, тăван чĕлхене, унăн пуянлăхне пĕлме, шухăшлама вĕрентеççĕ. Урок пуçламăшĕнчех çепĕç пуплев саманчĕ ирттеретĕп, дежурнăйсене калаçтарани, çут çанталăка сăнласа калаттарни те пуплеве аталантармалли хăнăхтарусем шутланаççĕ.

Чăвашлăха, тăван чĕлхене аталантарассишĕн чунтан вăй хурса ĕçлетпĕр. Кашни çулах Тăван чĕлхе эрнинчи тата Чăваш чĕлхи кунĕнчи уроксене, меро-



Содержимое доступно по лицензии Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)

приятисене кăсăклă ирттерме тăрăшатпăр. Вĕренекенсем çак кунсенче тăван чăваш чĕлхипе çывăхрах пулаççĕ; чуншăн та, ăсшăн та çĕннине нумай илеççĕ, пуянланаççĕ. Эрнелĕхсенче ачасем тĕрлĕ конкурссемпе куравсенче хутшăнаççĕ, литература каçĕсенче хăйсен пултарулăхне кăтартаççĕ, чăвашла илемлĕ ташлама пултарнипе тĕлĕнтереççĕ, чăвашлăха, тăван чĕлхене мухтакан юрăсене шăрантарса тата паллă чăваш сăвăçисеннипе пĕрлех хăйсем çырнă сăввисене вуласа вĕренекенсемпе вĕрентекенсене, курма килнĕ хăнасене савăнтараççĕ.

Кирек мĕнле мелпе усă курсан та вĕрентекеншĕн ачасем урокран малашнехи пурнăç валли мĕн те пулсан кирли илни пĕлтерĕшлĕ, çавна тĕпе хурса ĕçе йĕркелеме тăрăшатпăр. Тăван чĕлхемĕрĕн илемĕ нихăçан та ан сӳнтĕр, вăл ĕмĕрĕмĕр янăраса тăтăр!

***Список литературы***


1. Грамматика вăййисем: 5–9 классем валли / Л.П. Сергеев. – Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 2008. – 110 с.

2. Чăваш чĕлхи. Тĕслĕх программа: чăваш шкулĕн 5–9-мĕш класĕсем валли / И.А. Андреев, Г.Н. Семенова, Ю.М. Виноградов. – Шупашкар: Чăваш Республикин вĕренӳ институчĕн издательство центрĕ, 2013. – 63 с.

3. Чăваш сăмахлăхĕн вĕрентӳ меслечĕсем: Чăваш шкулĕн 5–11 класĕсенче вĕрентекенсем валли / З.С. Антонова, В.П. Станьял. – Шупашкар: Чăваш кĕнеке изд-ви, 2006. – 399 с.




Content is licensed under the Creative Commons Attribution 4.0 license (CC-BY 4.0)